# ĂÇТА КАЯН, АЧАМ?

**Сăвви Василий ДАВЫДОВ-АНАТРИН**




1. **Ăçта каян, ачам, ăçта каян!—**
   **Шухăшласах çапла пуçна таян!**
   **Сана тăван уй-хир пăхса юлать,**
   **Куççуль тăка-тăка пăшăрханать.**
   **А...**

2. **Ăçта каян, ачам, ăçта каян!**
   **Чуну вутпа çунать — хăвах туян,—**
   **Тăван кил-çуртунтан тухса таран,**
   **Яла-йыша хытах кулянтаран.**
   **А...**

3. Ăçта каян, ачам, ăçта каян!
Шухăшласа çаплах пуçна таян.
Аçу-аннӳ çине пăхса илсем,—
Пит кулянса юлаç халĕ вĕсем.
А...

4. Ан кай, ачам, ан кай, килтен ан кай,
Ваттисене макма сан кирлĕ мар.
Яла-йыша чунтан сума сусан
Ху телейне тăван килтех тупан.
А...

# КУÇÇУЛЬ ТĂКСА АН ЙĔР, АННЕ

Сăвви Васлей ДАВЫДОВ-АНАТРИН



1. Куççуль тăкса ан йĕр, анне,
Шансам тăван ачусене.—
Эпир санпа пĕрле ялан,
Атте çуртне нихçан манман.

2. Куççуль тăкса ан йĕр, анне,
Шансам çумри ачусене.—
Эпир килтен тухса кайман,
Асаттесен ятне яман.

3. Куççуль тăкса ан йĕр, анне,
Шансам тăван ачусене.—
Эпир çĕр ĕçĕнчен тарман,
Сан пиллĕхне асран яман.

4. Куççуль тăкса ан йĕр, анне,
Шансам çумри ачусене.—
Эс пур чухне тĕнче хитре,
Хавхаланса тапать чĕре.

# ТАВАХ СИРЕ, УЧИТЕЛЬСЕМ

*Г. И. Петрована халалласа*

**Сăвви Василий ДАВЫДОВ-АНАТРИН**



1. Ытараймн çыннăмăрсем,
Асран каймн учительсем,
Чун-чĕререн тав тăвап сире,
Сăпай пулма вĕрентнишĕн,
Ĕçчен пулма хал панишĕн,
Манас çук нихăçан та сире.
Мĕн ачаран ăс панишĕн,
Анне пекех юратнишĕн,
Тайма пуç, учительсем, сире.
Мĕн ачаран ăс панишĕн,
Анне пекех юратнишĕн,
Тавтапуç, учительсем, сире.

Хушса юрламалли:

Ла-ла-ла-ла-ла-ла.
Ла-ла-ла-ла-ла-ла.

2. Ытараймн çыннăмăрсем,
Пире саван учительсем,
Чун-чĕререн тав тăвап сире.
Ĕмĕрех асра усратăп,
Чунра яланах туятăп,
Эс пилленĕ такăр çул-йĕре.
Ăшă кăмăллă пулнишĕн,
Тăрăшса ăс-тăн панишĕн,
Тайма пуç, учительсем, сире.
Ăшă кăмăллă пулнишĕн,
Тăрăшса ăс-тăн панишĕн,
Тавтапуç, учительсем, сире.

3. Ытараймн çыннăмăрсем,
Нихçан манмн учительсем,
Чун-чĕререн тав тăвап сире,
Мăшăр çунат пилленишĕн,
Çӳл тӳпене çĕкленишĕн,
Ĕмĕр-ĕмĕр пуç таяп сире.
Пурнăçра телей сунатăп.
Çирĕп сывлăх халаллатăп,
Юратса вĕрентнĕшĕн пире,
Пурнăçра телей сунатăп,
Çирĕп сывлăх халаллатăп,
Тавтапуç, учительсем, сире!

# ЭЙ, ХĂТАÇĂМ, ХĂТА

Сăвви Васлей ДАВЫДОВ-АНАТРИН

Кăмăллăн



1. Эй, хăтаçăм, хăта,
Ан васка-ха, тăхта.
Тĕл пулатпăр санпа пит сайра.
Эсир халь хăнара!
Лар çумма, юнашар,
Пĕрле чух савăнса калаçар.

2. Эй, хăтаçăм, хăта,
Илем кӳтĕн çурта,
Тайма пуçăм сана кăмăлтан.
Ман хаклă тăванăм!
Лар çумма, юнашар,
Пĕрле чух савăнса юр юрлар.

3. Эй, хăтаçăм, хăта,
Мĕн калам-ши тата!
Тыт-ха эсĕ тулли куркуна —
Ыр сунатăп сана.
Лар çумма, юнашар,
Пĕрле чух савăнса пурăнар.